## Менелник умĕн

### 1

Хĕллехи каç — палламан вăрман, вĕçне-хĕрне тухса пĕтерессĕн туйăнмасть. Тахçаван çăлтăрсем тухнă, сивĕ те тĕпсĕр тӳпере çӳçенмеллех сиксе чĕтреççĕ. Каталнă уйăх та катари вăрмантан çĕкленет: вăл та шăнса кайнă, çурăмне палăрмаллах асатлатнă.

Ялхуçалăх техникин районти уйрăмĕнче кил хушшинче икĕ прожектор çунать, вĕсен çутинче сивĕ вăй çăмăл тĕтре пек палăрать. Икĕ хутлă кантурта пĕр чӳречеллĕ пӳлĕмрен кăна çутă тухать. Пас тыгтнă хурăнсем юмахри пек илемлĕ.

Лев Петрович киле кайма хатĕрленнĕччĕ кăна, тахăшĕ пӳлĕм алăкне шаккарĕ, анчах хуçи шарличченек яр! уçса ячĕ. Малтанах аслă инженер хура кĕрĕке асăрхарĕ, юрлă хура кăçатă курăнчĕ. Хуçине те самантрах палласă илчĕ вăл, пуканĕ çинчен çĕкленсе ун патне пычĕ. Кĕни пакша тирĕнтчен çĕленĕ çĕлĕкне хыврĕ, тути урлă çыхнă шарфне салтрĕ.

— Андрей Ермолайч! Ырă каç пултăр сана, — пӳлĕм хуçи хăнан шăнса кайнă аллисене чăмăртарĕ.

— Салам-ха, Левка, — пăштăк-пăштăк сывласа тавăрчĕ кĕни. Васкамасăр пасарнă çĕлĕкĕн хăлхине хăпартса çыхрĕ, кăштăртатса пырса сĕтел çывăхĕнчи пукан çине ларчĕ. Пӳлĕмре сасартăках йода шăрши сарăлчĕ, кĕнĕ çынпа пĕрле аптека килнĕн туйăнчĕ.

— Аван çанталăк, Левка, — сывлăш çитменнипе хăвăрт сывласа пуçларĕ кĕни. — Ăслă пулнă ваттисем. Турă пăр çине ансан, шартлама сивĕсем пуçланаççĕ, тенĕ. Турă анчĕ, сивĕ илсе анчĕ.

— Мĕн эс, Андрей Ермолайч, турă пирки калаçа пуçларăн? — ыйтрĕ Лев Петравич, хăй аванмарланнине туйса. Вăл тусĕ умĕнче айăплă туйрĕ. Ĕçе-хĕле пулах уйăх çурă ун патне çитсе курман. Вара час-часах Андрей Ермолаевич калакан сăмахсем тепĕр хут хăлхара янранăн туйăнчĕç: «Вăй пур чухне пуриншĕн те кирлĕ, ватăлсан никама та кирлĕ мар». Унăн ыйтăвĕ те ытла кăнттам тухрĕ, çакна вăл çийĕнчех ăнланса илчĕ.

— Ватăлсан çын нумай палкать. Пушкин каланăччĕ пулас: кĕр енне çанталăк йĕперех, ватăлсассăн çын пакăлтирех, — пăштиклетсе сывласа тавăрчĕ Авдрей Ермолаевич.

Хуравĕ калаçăва сĕвĕрсе яраканскер кăна пулчĕ, малтанах Лев Петрович хирĕç тавăрма сăмах та тупаймарĕ, вăл ăна тинкеререх сăнарĕ кăна. Юлашки çулсенче Андрей Ермолаевич ытла та хăвăрт сарăлса кайрĕ, халь вăл вунă çул каяллахи йăрă та лара-тăра пĕлмен старике аса та илтермест. Юлашки вăхăтра татах хавшанă пулас. Куç айĕсем шыçăнса аннă, чакăр куçĕ тĕссĕрленнĕ, куç хупанкисем те йăлтах шурса кайнă.

— Ĕçех тăна илет, Андрей Ермолаевич, — хăйне тӳрре кăларасла сăмах хушрĕ Лев Петрович.

Старик унăн сăмаххисене хăлхана та чикмен пек туйăнчĕ, халь ĕнтĕ вăл хăйĕн хуйхи-суйхине, хăйĕн чĕрери шухăшне те уçма вăтанмарĕ:

— Эмфиземăпа бронхитах пĕтерет, Левушка!

Ку сăмахсем хыççăн пурте хăй вырăннех ларнăн туйăнчĕ, пĕр-пĕрне курман хушăри паллăмарлăх пăрĕ ирĕлме тытăнчĕ.

— Каллех йод ĕçрĕн-и?

— Кунне виçĕ тумлам. Кăкăрсене сăтăратăп тата.

— Усси пур-и?

— Ватăлсан, Левушка, эмел те пулăшмасть. Вăхăтлăха утнакăрах кăшт.

Андрей Ермолаевич хăйне евĕр çын. Ку тарана çитсе те вăл этеме сыватакан больницăна ура ярса пусман. Лавкка чейне ĕçмест вăл, ăна çулла пухса хунă тĕрлĕ курăксенчен вĕретет, хăйне хăех сипленет. Нумайăшĕсем халь те унăн ăсĕ-тăнĕ чакманнинчен тĕлĕнеççĕ, вăл ача чухне мĕн пулнисене те лайăх астăвать.

— Плана тултартăр-и? — ыйтать Андрей Ермолаевич.

— Ирттерсех тултартăмăр. Ăшталанма тиврĕ. Запаслă пайсем çитмеççĕ. Çĕнĕ çулчченех сакăр комбайн юсарăмăр, халь татах иккĕ. Историре пулман япала. Те ырра, те усала, — тавăрчĕ аслă инженер.

— Нон прогрэди эст рэгреди, — терӗ хӑна. — Ҫаплах латынла вӗренме ларма вӑхӑт тупаймастӑн ӗнтӗ. Инженер халь эс, инженер, — пуҫ пӳрнине ҫӗклерӗ вӑл. — Малалла кайманни каялла чакни пулать, тенӗ латынь. Амат викториа курам. Ҫӗнтерӳ тӑрӑшнине юратать. Сисетӗп, Левушка, тӑрӑшатӑн. Ҫӗнӗ ҫул каҫӗ килне шӑнкӑравларӑм. Тая: мастерскойра, терӗ.

— Ҫӗнӗ станока ӗҫе ятӑмӑр вӑл каҫ.

— Аван, ӑмсанатӑп сан хастарлӑхна. Эп мӗн... Хавшарӑм кӑштах. Пухӑва та, член укҫи тӳлеме те килеймерӗм.

Андрей Ермолаевич чӗтрекен аллисемпе парти билетне кӑларса Лев Петрович умне хучӗ.

— Тӳлесе ятӑм эп. Билету ҫине ал пусса парам. Куншӑнах сивӗре ҫӳреме те кирлех марччӗ.

Хашш! — сывлать Андрей Ермолаевич, билет ӑшӗнчен виҫӗ тенкӗ укҫа кӑларса, Лев Петровича сӗнет.

— Кӳрентертӗн... Санӑн укҫу кирлех пуль мана.

— Эх, Ермолайч. Пайламанччӗ ӗлӗк эпир укҫана. Санӑн пулсан, манӑн пулнӑ...

— Сана мар эп, партие паратӑп, — ҫирӗппӗн тавӑрать старик. — Сапинэс ниль аффирмат, квод нон пробэт. Ӑсланса ватӑлнӑ ҫын пуш параппана ҫапмасть, тенӗ латынь. Ил эс. Тен, кайран та часах килеймӗп. Хавшарӑм эп, Левушка, ох хавшарӑм, — тесе Андрей Ермолаевич ҫӗкленет, парти билетне шалти кӗсъене чиксе кӗрӗк тумине тӳмелет.

— Каҫар, чӑрмантартӑм сана.

— Тӑхта, пӗрлех кайӑпӑр. Ман пата кӗрсе чей ӗҫӗпӗр. Октябрь уявӗнчен вара пулман эс ман патра.

— Ун пак те юрать, — сасартӑк килӗшет старик. Лев Петрович ӑна тути урлӑ шарфне ҫыхма пулӑшать, каллех ҫӗлӗк хӑлхине антарса парать.

Ялхуçалăх техникин уйрăмĕн поселокĕ хулан çурçĕр еуче ларать. Ăна хуларан пысăках мар вăрман уйăрать. Вăрманĕ сайраскер, йывăçĕсем ватăлса кайнă. Анчах хăйсем хĕсĕр пулман, çил хурăн вăррисене хӳме тытса çавăрнă МТС картишне килсе тăкнă, халь чул хӳмесем тавраллах, чăн-чăн хурăн ращи кашлать.

1953 çулхи сентябрьти постановлени хыççăн механизаторсене çĕр уйăрса панă. Пĕр çичĕ çул хушшинче кунта утмăл киллĕ урам ӳссе ларчĕ. Урамĕ çиппе çапнă пек тӳрĕ, çурчĕсем кăна тĕрлĕрен. Кунта Куславккари çуртсем тăвакан завод кăларнă пӳртсенчен тытăнса чăрăшпа хырсенчен пураланисем те, шлакран тунисем те, кирпĕчрен купаланисем те пур. Урам варринче, пĕр-пĕрне хирĕç, сакăршар хваттерлĕ икĕ хутлă чул çурт ларать. Ыттисем вара йăлтах харпăр хăйсен. Пӳртсем умĕнче пĕчĕк пахчасем, кашниех чиесем лартса тултарнă. Çуртсем хыçĕнче сад: чиесем, улмуççисем, сливăсем. Çуркунне поселок шап-шурă чечек ăшĕнче ларать.

Лев Петрович хăйĕн пӳртне 1954 çулта лартрĕ. Малтанах, йыш çук тесе, пысăка хапсăнмарĕ вăл. Никĕсĕ валли кирпĕч заводĕнчен ванса пĕтнĕ кирпĕчсем илсе тухрĕ. Çу каçиччен шалтанултшар метра ӳкекен пӳрт хăпарса ларчĕ. Ун чухне пĕр ача кăначчĕ, кайран тата иккĕ хутшăнчĕç, вĕсене пăхма ялтан амăшне илсе пыма тиврĕ. 1960 çулта çав пӳрт çумне тăвата метр тăршшĕ шлакранах кухнья хăпартрĕ, пӳртне вĕри шывпа хутмалла турĕ.

Урама çатма пекех хырса тасатнă, ăна юпасем тăррине çакнă электричество лампочкисем çутатаççĕ. Çулĕ хытса ларнă, вăл пăр евĕрлех яка.

Андрей Ермолаевичпа Лев Петрович васкамасăр утаççĕ. Сăмах та чĕнмеççĕ пĕр-пĕрне. Пенсионер йывăррăн пăштиклетсе сывлать, унăн хăйĕн шухăшĕ. Вăл ялхуçалăх уйрăмĕн корпусĕсене сăнать. Вĕсем иккĕ, пĕринче гусеницăллă тракторсем, тепринче автомашинăсем юсаççĕ. Иккĕшне те çĕнĕрен, юлашки виçĕ çул хушшинче туса лартнă. Ăна строительство организацийĕ туман, Левушка хăй çынсене пухса йĕркелерĕ, бригада турĕ, ĕç

хыççăн рабачисене те пĕрер сехет пек ĕçлеме хăварчĕ. Ун чухне Андрей Ермолаевич та кашни кун тенĕпе пĕрех кунта килетчĕ, унăн Левушка еплерех хушусем панине е хăй те носилкăпа бетон шĕвекĕ йăтнине, бетон пăтратакан машина çĕмĕрĕлсен хăех ĕçе янине пăхса савăнатчĕ. Ахаль те жытканскер, вăл ун чухне кăранташ пек çинçелсе кайнăччĕ. Андрей Ермолаевич та кĕреçе тытса çаврăнакан машина ăшне е хăйăр, е цемент сапатчĕ. Хĕпĕртенĕ Левушка ăна çурăмĕнчен лăпкаса çапла калатчĕ:

— Инженер тăватăп санран, Ермюлайч.

Кунта вăл килте пĕччен ларассинчен кăна килкеленĕ. Старик мĕн ачаран машинăсене юратманнине, вĕсем юлашки таса сывлăша та шăршлантарса вараласçĕ, тесе вăрçнине такам та пĕлнĕ.

Корпуссене те туса пĕтерчĕç, Левушка çапах талăкĕ-талăкĕпех мастерскойран тухма пĕлмест, çĕнĕ çулччен тракторсем юсама икĕ смена йĕркелерĕ, халь запаслă пайсем çитменнипе кăна пĕр смена ĕçлет. Рабочисем ăна юратаççĕ, — шухăшлать Андрей Ермолаевич. — Тая епле тӳсет ăна? Трактористран шăршă кĕнĕ пек шăрш кĕрет унран, кашни кунах соляркăпа çăвăнать тейĕн. Нумай пурăнаймасть вăл ман пек, çитмĕлсене çитĕ-и?

Лев Петрович та, урисене пĕчĕк ача евĕр пĕчĕклетсе пуснă май, çапла шухăшлать: «Хавшарĕ старик. Сывлăшĕ пĕтсех ларать. Нумаях пурăнаймасть пуль. Ĕç пиркиех кĕрсе те кураймастăп. Тая та уйăхлăх курсра пулчĕ, кĕпи-йĕмĕсене те çуса параймарĕ халь, кама çутаркаларĕ-ши? Эх, ытла та хăйне евĕр этем, тахçанах ярасшăнччĕ ваттисен çуртне, кам кăмăлне пурăнать кунта, пĕлме те хĕн. Карчăкĕ çĕре кĕни те пилĕк çул...»

— Левушка, Тайăна чăрмантаратпăр кăна пуль. Чейне, тен, шăматкун ĕçĕпĕр?

— Чипер калаç, Ермюлайч. Тая та, ачасем те хĕпĕртеççĕ ак. Пырса та курми пултăн.

— Сывлăш çук, Левушка, — хăй сывлăхне сăрăпланăн персе ярать старик.

— Яш чухнехи мар ĕнтĕ...

Пӳрте кӗрсенех хӗвӗшу пуçланчӗ, Лев Петравичӑн икӗ ачи Андрей Ермолаевича сырса илчӗç. Асли кӑна, шалти пӳртре урок вӗренсе лараканскер, кухньӑна тухса сывлӑх сунчӗ, Андрей Ермолаевича патне пырсах ал пачӗ.

— Мӗнле пурӑнатӑн, Вовка?

— Экзаменсене хатӗрленетӗп. Тӑххӑрмӗш класс программине вулатӑп.

— Хатӗрлен, хатӗрлен, чӑрмантармӑпӑр сана.

Тая çенӗкрен сӑмавар йӑтса кӗчӗ (хӑйсем вӗсем чейникпе вӗретеççӗ, газ пур), ӑна чӗртрӗ. Шывӗ çине малтан хатӗрлесе хунӑ хӑмла çырли, хурлӑхан турачӗсем ячӗ. Сакайӗнчех алтнӑ нӳхрепрен хӑмла çырли варенийӗ илсе тухрӗ.

Хӑна шалти пӳртре ларать, Вовкӑпа ытти ачисем кухньӑра ӗнтӗ. Ашшӗн çирӗп алли килте те сисӗнет, вӗсене вӑл: пире ан чӑрмантарӑр, тесе кӑна каларӗ, лешӗсем сӑмах чӗнмесӗр çухалчӗç.

— Кроликсем пурӑнаççӗ-и?

— Пурӑнаççӗ, Андрей Ермолаевич. Хӑвӑрӑн тата?

— Кӑçал виçӗ ама кӑна хӑвартӑм. Çитет.

— Çитет, — килӗшет Лев Петравич.

— Хуртсене сивӗ тивмест-и кӑçал?

— Ӑна-кӑна пӗлместӗп, унпа Тая айланать, эп хутшӑнман. Тая! Хуртсем сывах-и? — кӑшкӑрать кил хуçи.

Платйи çийӗн умне саппун çыхнӑ арӑмӗ шалти пӳрте кӗрет, хулпуççи урлӑ хунӑ алшӑллипе алне шӑлать.

— Кӑçал мӑклӑ витене куçартӑмӑр, Андрей Ермолаевич. Хуртсем вӗçсе тухмалли шӑтӑкне питӗрсех лартнӑ, хӗл сивӗ пулать.

— Сивӗ. Тӗрӗс, — килӗшет хӑна. — Кур-ха вӗсене, хурт-кӑпшанкӑ кӑна, этемрен лайӑх пӗлет, э-э.

— Хуртсем вӗсем ӑслӑ, — тавӑрать Тая.

— Колхозсенче çаплах утарсене пӗтереççӗ-и?

— Районӗпе кӑçал виççӗр çемье хутшӑнчӗ, Андрей Ермолаевич.

— Пĕтерме ан пар, Тая. Пĕлмеççĕ çынсем пыл уссине. Эмел вăл, эмел. Пĕвертен те, вар-хырăм чирĕнчен те, чĕререн те лайăх, юн пулма каять вăл. Халь председательсем пурте экономистсем пулса кайрĕç. Мĕн тăкак парать, ăна пĕтереççĕ, тăвасси пирки сахал шутлаççĕ, — ятлаçать Андрей Ермолаевич.

— Кăçал районĕпе пăр кило пылăн хăйхаклăхĕ икĕ тенкĕ çура ларчĕ.

— Патшалăх икĕ тенкĕпе илет-и?

— Çапнла.

— Пасарта виçĕ тенкĕ. Мăн тăкакĕ пур унта? Çитерĕр колхозниксен ачисене, шкулта вăренекенсене. Кашни кун пыл чейĕ ĕçтерĕр. Сывлăхлă ӳсеççĕ вара ачасем, чир те тивмест вĕсене.

— Киров ячĕпе хисепленекен колхозра валеççе пачĕç.

— Вăт лайăх. Вĕсен утарĕ те виççĕ пулас.

— Çапла. Сăмавар вăреме кĕчĕ. Чупам-ха.

Кăçех вĕсем чей ĕçме пикенеççĕ. Андрей Ермолаевич стаканран чейне чашăк çине ярать, ăна малтан киленсе шăршлать.

— Хăть хурлăхан, хăть хăмлă çырли — ниме тăман япала пек, анчах усси этемшĕн... Хими çине тăрăнчĕç пирĕн профессорсем, йывăçн-курăка манса кая пуçларĕç. Хими вăл, Левушка, çукран çупкă кăна, — калаçать старик.

— Эп ăна-кăна чухлаймастăп, Ермолайч.

— Начар, — вăрçать старик. — Вĕрилле ан ĕç, Левушка. Хырăмлăх ракпа чирлеме пултарать.

— Йăли ман çапла. Яланах васкатăп.

— Васкама кирлĕ мар. Пурнăç пирĕн ахаль те кăске.

— Çитет пире пурăнмалăх.

— Эх, çамрăксем эоир... Ăс мар калаçать сан, çамрăклăх... Çамрăклăх калаçать, Левушка, — тесе Андрей Ермолаевич пылпа хăмла çырли варенине чашăка хурать, вăре-вăре сыпать. Тая унăн стаканĕ çине пыл ярать.

— Нумай ан хур, тарлаттарать, — асăрхаттарать старик.

— Кĕçĕр кунтах çывратаппăр, çак сивăре ямастпăр, — тавăрать Тая.

— Апла яр, — килĕшет Андрей Ермолаевич. — Дисуэ, сэд а дактие, индоктис ипсе доцуэто[1]. Эс, Тая, хуртсем пирки институт пĕтернĕ, эс ученăй, санран вĕренме юрать.

— Сапинас ниль аффирмат, квод нон пробэт[2] — тавăрать Тая.

— Пуçланчĕ ĕнтĕ халь, — кăмăлсăрланать Лев Петрович. — Нимĕçле е акăлчанла калаçăр хăть, эп хам та тавçăрăп кăштак, атту вулатăр вилнĕ чĕлхепе.

— Ох йăнăшан, Левушка, ох йăнăшан. Латин вилмен-ха, вилмест те. Вăл чĕлхепе ăслисемпе калаçма лайăх.

— Уйрăммăнах чей ĕçнĕ чухне, — кулать Тая.

— Пур чухне те, — касса татать старик, кил хуçине пăшăрханса сăнать, унтан çирĕппĕн хушса хурать: — Вĕрен эс те, Левушка.

— Тая пĕлни те çитĕ.

— Тая хăйшĕн пурăнать, эс — хăвăншăн.

— Ăçта мана ют чĕлхе. Нимĕç чĕлхипе те экзамен иккĕмĕш курсра кăна патăм, — тавăрать кил хуçи. — Талант çук манăн, Андрей Ермолаевич. Техника тесен...

— Кунта эс профессор, — килĕшет старик. — Анчах латин çапла каланă: дилингэнциа ин омнибус рэбус валет. Куçарса пар, Тая.

— Тăрăшни пур ĕçре те кирлĕ.

Халь Андрей Ермолаевич ача пек акăлтатса кулать, çамки çине тапса тухнă тарне Тая панă питшăллипе сăтăрать. Хăй вăл эрех сыпнă çын пек хĕрелсе кайнă, питĕнчи юн тымаррисем татах та ытларах палăраççĕ.

— Эс ветврач, сана латин кирлĕ, — парăнмасть Левушка.

— Пур ветврач мар, этем врачĕ те, тепри, латине пĕлмест, тусăм.

Инженер шарламасть. Ĕлĕк, пĕрле ĕçленĕ чух, Андрей Ермолаевич латинла сайра хутра кăна перкелешетчĕ, юлашки вăхăтра унпа супсах çитрĕ ĕнтĕ. Тăрать-тăрать те персе ярать темĕнскер сăмахне, хăй ахăлтатса кулать. Ăсĕ ачаланать пуль çав, хăй шухăшĕпе вăл тенчери пур интеллигент та

латинла калаçма пĕлет, тет, пулас. Ялхуçалăх уйрăмĕн директорĕ — агроном, вĕсене тĕрлĕ курăк ячĕсене латинла вĕрентнĕ, анчах вăл та ăнланмасть. Тая ялхуçалăк управленийĕнче ĕçлет, вăл та ытлашши пĕлмест, Андрей Ермолаевич кăмăлне тесе кăна тепĕр чух латин чĕлхине вĕренкелет.

Чей ĕçнĕ хыççăн тата нумай калаçкаласа лараççĕ вĕсем. Телевизорпа паракан спектакле пăхаççĕ. Вара çывăрма выртаççĕ.

## 3

Андрей Ермолаевича диван-кравать çине вырăн сарса панă. Тӳшекĕ хур тĕкĕ пулас, ытла та çемçе. Утюгпа якатнă простыньрен гостиница шăрши кĕрет, вара Андрей Ермолаевич çын патĕнче халь çине вунă çул ытла çывăрманнине аса илет.

Малтанах куçне уçса выртать, пĕлет: пурпĕрех халех çывăрса каяймасть. Ӳпки хăйăлтатать ун, анчах хăмла çырли варенипе пыл сывлама самаях çăмăллатрĕç. Пĕлет-ха вăл, ӳпки ун хăй ĕмĕрне çитет, энфизема темех мар. Анчах чĕрине шанмасть. Пилĕк çул каялла инфаркт пулчĕ ăна. Ун чухне Юлия Сергеевна та сывахчĕ, юрать-ха урайне тĕшерĕлсе аннă чух вăл килте пулман. Тăна кĕрсенех Андрей Ермолаевич диван çине куçса выртнăччĕ, кайран, мăшăрĕ килсен, пĕр пĕчĕк рюмка коньяк пама кăна ыйтрĕ. Вырăнтан хускалмасăр эрне выртрĕ, анчах чĕрепе аптранине никама та каламарĕ. Çавăнтанпах вăл кăсйинче пĕчĕк кĕленчепе коньяк чиксе çӳрет, аптрасанах пĕр сыпкăм ĕçет, вара чарăна-чарăна тапакан чĕре каллех лăпланать. Вăл ун пек чухне сылтăм аллипе кăкăрне йăвалать, тарăнрах сывлама тăрăшать. Юлашки вăхăтра чĕре йăлтах анратса çитерчĕ, пĕрмаях систерет. Йăлтах, йăлтах урăх шухăшсемпе пынăччĕ вăл паян Левушка патне, ниçтан та хăйса калаймарĕ. Мĕнех, вăл ыран çитет те ак килне çăмăллăнах вилет, тахăш самантра чĕри ыратса кайĕ, вара пулчĕ те... Вилес умĕн хăй ирĕкне çырса хăварать.

Тăтăшах канăç паман шухăшсенчен хăтăлас килет, ниепле те хăтăлаймасть. Е ăна, утмăл çулхи старике, ветеринари службин полковникне,

ӗнер çеç салтакран таврӑннӑн туйӑнать. Пурте хӗпӗртесе таврӑнатчӗç вӑрçӑран, вӑл кӑна савӑнӑçсӑрччӗ, пӗр арӑмӗшӗн тата тӑван кӗтесшӗн таврӑнчӗ. Виçӗ ывӑлран пӗри те таврӑнмарӑç. Кӗçӗнни пирки темӗнле шанӑç та пурччӗ-ха, ӑна 1945 çулта хыпарсӑр çухалнӑ тесе пӗлтерчӗç. Каярахпа тин паллӑ пулчӗ: пирӗннисем январь уйӑхӗнче наступление куçас умӗн ӑна десантпа нимӗçсен тылне пӑрахнӑ. Десантниксен ротин командирне, Борис Андреевич Ермолаева, чи юлашкинчен сикнӗскере, нимӗçсем çавӑрса илнӗ, анчах ку парӑнман, юлашки патронӗпе хӑй пурнӑçне татнӑ. Малтанах, уявсенче-мӗн ӗçсен, Андрей Ермолаевич ӗсӗклесех макӑратчӗ, — хӑть пӗр ывӑлӗ сывӑ тӑрса юлнӑ пулсан! Часах Андрей Ермолаевич та çӗре кӗрӗ, вара Ярмуша ӑрачӗ те сӳнет. Хӑй вӑхӑтӗнчи çынсем ӑна кӑштах асӑнкаласа пурӑнӗç ӗнтӗ. Пурччӗ, тейӗç, Ермолаев — выльӑх тухтӑрӗ... Çамрӑксемшӗн мӗн... Вӗсем манаççӗ. Комсомолецсем патне, пионерсем патне те пӗрре мар кайнӑ-ха вӑл, пӗрре кӑна мар Чӑваш республикинче совет влаçне туса хуни çинчен каласа панӑ. Хӑйне икӗ хутчен пенине те пытарман вӑл. Телей пулнӑ-и унӑн, пӗррехинче, колхоз йӗркелесе таврӑннӑ чух, вӑрманта тӗксе пенӗ пек печӗç, пуçри карттус таçта сирпӗнсе кайрӗ, çӳçӗсем те ӗнчӗç. Юрать лашапа пулнӑ та, лаша çӑлнӑ.

Шухӑшсем ун пӑтранчӑк, халех вилӗм кӗтмест пулас ӑна, вилес умӗн ӑстӑн урӑхланать, теççӗ. Вӑл тӗлӗрсе каять, анчах ыйхи тарӑн мар...

...Лев Петрович та çывӑраймасть. Шухӑшӗсем ун каллех Андрей Ермолаевич пирки. Илтме тахçанах илтнӗччӗ-ха вӑл ун çинчен, анчах паллашма унпа 1953 çулта кӑна паллашнӑ. Техникум пӗтерсен, Лев Петрович çак МТОрах ӗçлерӗ, çара кайса таврӑнсан, ӑна аслӑ механик пулма лартрӗç. Андрей Ермолаевич МТСӑн аслӑ ветврачӗччӗ. Ун чухне ларса çӳремелли çукрахчӗ, Андрей Ермолаевичӑн вара районта та çук рысак пурччӗ, «Каракуль» ятлӑскер. Ӑна вӑл хӑй укçипе туяннӑ, хӑй пӑхса ӳстернӗ. Çатан урапи те ун хӑйӗнччӗ. Колхозсене кайнӑ чух Лев Петрович унпа ларса тухса каятчӗ. Ӑна старик питех те кулӑшла пек туйӑнатчӗ, районта ун палламан çын

та çукрах пуль. Пĕр-пĕр паллană çынпа тĕл пулсан, унан сывлăхĕ пирки мар, выльăххи çинчен ыйтса пĕлетчĕ:

— Красуля урăх чирлемерĕ-и?

— Сутрăм эп ăна кăçал. Ватăла пуçларĕ.

— Сĕт çăлне виçĕ пӳрне кĕретчĕ. Шел.

— Сĕтлĕччĕ, — килĕшет хуçи.

— Çĕнни епле?

— Туянаймарăм-ха, Андрей Ермолаевич.

— Хирпуçĕнчи Сидоров сутать. Ĕни сĕтлĕ, анчах хырăмĕ аслăрах. Кайса пăх, килĕшсен туянăн.

— Тавтапуç, Андрей Ермолаевич.

— Ну, сывă пул-ха.

Рысакĕ ун çивĕч пулин те хуçине итлет. Çынаа калаçнă чухне вăл чăтăмлăн кĕтсе тăрать, малтан урипе кăна кукалет. Тилхепене карăнтарсанах тăсăлса ӳкет, хăйĕн улшăнми юрттипе ыткăнать.

Каллех палланă çынна тĕл пулать-и врач, каллех чарать лашине, каллех сăмах пуçарать:

— Иртнинче эп сана калама маннă: ĕнӳне эс хĕлле тӳрех типĕ апат çине ан куçар. Çĕрулми паркала, кăшман, унăн çĕр хучĕ хавшакрах. Каллех чирлеме пултаратъ. Кикене пĕлетĕн-и? Пĕлетĕн. Вăт çавăн тымарне кăлар та шĕшлĕ аври пеккине пĕр литр шыв çине ярса вĕрет. Апат çими пулсан, пĕр витре шыва çур стакан ярса пар.

— Тавтапуç, Андрей Ермолаевич.

Колхоза çитсен, вăл лашине çаплипех, ниçта кăкармасăрах, тăратса хăваратчĕ, хăй правленине кĕретчĕ. Лаши ун итлеме хăнăхнă салтак пекек тăратчĕ вара. Унтан врач фермăсене каять, анчах ятлаçма пĕлместчĕ вара хăй. Вĕрентет, вĕрентет. Зоотехниксене вăл чĕререн кураймасть, харам пырсем тесе вăрçать, ун шучĕпе вĕсем ниме тăман тата никама та кирлĕ мар специалистсем кăна.

— Зоотехниксем мар, ветврачсем кирлĕ колхозсене, — тетчĕ вăл час-часах. — Апачĕ пулсан эпир ăрат уйăраймастпăр-и е рацион тума пĕлместпĕр-и? Кăлараççĕ вĕсене, кăлараççĕ. Мĕн тума? Кăларасчĕ пĕр виçĕ хут ытларах ветврач. Апачĕ çуккă пулсан, зоотехник мĕн тăвайрать? Улăма пĕçерсе панипе сĕт ытларах. сăвасшăн. Эх, ăçтиçук сĕтĕрĕнчĕксем. Ахаль укçа илсе пурăнаççĕ çав.

Ĕçлеме Андрей Ермолаевич чăнласах ĕçлетчĕ. Колхоз фельдшерĕпе пĕрлех укол та тăвать, çăмарта та касать, кирек кам пырса чĕнсен те, турткалашса тăмасть, тӳрех каять. Ырă кăмăллине курччăр çынюем — ун патне пыракан сукмак курăкпа ӳссе лармасть.

Тата тепер хăйевĕрлĕхĕ пур ун: техникăна юрăтмасть. Вăл час-часах çапла вăрçатчĕ: «Этем ăсĕ тĕнчене çĕнетрĕ, этем ăсĕ тĕнчене пĕтерет!» Мĕн калас тенĕ вăл çак сăмахсемпе, Лев Петрович халь те пĕлмест. Анчах ĕçлеме пăрахсан та вăл час-часах калаçура тапрататчĕ:

— Колхозниксем лашасене пĕтереççĕ, вăрçă тухсан мĕнле ĕçлес теççĕ-ши? Ну, ухмахсем, эх, ухмахсем! Председательсене халь вĕлтренпе çапакан çук. Тракторсем вĕсем мĕн? Вăрçă тухрĕ те, илсе кайрĕç, — тесе хирĕçлетчĕ.

— Халь техника тем тума та çитет, — тавăратчĕ Лев Петрович.

— Çитет, — йĕкĕлтесе илет ветврач. — Атом вăрçи пулсан, вилĕ япала вăл. Ăна шывпа тапратаймастăн. Тăшман чи малтан машинăсене горючисĕр хăварма тăрăшать.

— Лаша чĕрех юлать-и тата?

— Лаша вăл — ялта. Ял кирлĕ мар тăшмана. Ялăн ĕçлес пулать, ялăн çĕршыва тăрантармалла, — хирĕçлет старик. Çав самантра ăна чăнласах пĕтĕм çĕршыв пуласлăхĕ хумхантарать, старик ятлаçать, чĕререн пăшăрханать.

— Çӳлерех çыр эс, — юĕнет Лев Петрович.

— Мансăрах ăслисем нумай унта. Семен Михайлович Буденный хӳтĕлекелет-ха лашасене. Стариксем çав эпир, итлесшĕн мар пире. Стариксем...

Кайран, пенсие тухсан, «Каракуль» рысакне вăл МТСа парнелерĕ. Ун чухне директорăн çăмăл машина пурччĕ, те конюх тытса усрас мар тесе, тепĕр çултанах рысака сутса ячĕç. Старик пĕр виçĕ çул юнăхса çӳрерĕ, МТСа пырса та курмарĕ. Кайран, МТСа пĕтерсен, тĕрĕс турĕç тесе савăнчĕ, МТС çумĕнче хăй ветврачра ĕçленĕ тапхăра та «ухмахла тапхăр» терĕ; мана, аллă çул ветврачра ĕçленĕ çынна, вилĕ техника çумне кăкарса хурасшăн пулчĕç. Намăс, ачасем, намăс, терĕ.

Вăрçкаларĕ, вăрçкаларĕ те лăпланчĕ. Ăçта каян тата, механизаторсем патне каймасан? Вăл вĕсен поселокĕнче пурăнать, ăна МТС хваттер панă. Сайра хутра старик ветеринари станцине кайкаласа килет, вара тепĕр тапхăр савăнăçлă çӳрет.

— Çăмăлланчĕ ĕçлеме ветеринарсене. Колхозсенче халь апат тулăх. Эй, хам ĕмĕрте пайтах çакса таратнă выльăха сыватнă. Пайтах. Халь пулсан еплерех ĕçлемелле эп.

Выльăх тухтăрăсене вăл этем тухтăрĕсенчен ăслăрах тесе шутлать, врачсене «экскулап» тесе вăрçать.

— Чирлĕ этем вĕсене хăй чĕлхипе каласа паратъ, вĕсем тепĕр чухне тĕрĕс диагноз лартма та пĕлмеççĕ. Выльăхăн чĕлхи çук, анчах ку таранччен эп пĕрре çеç тăрĕс мар диагноз лартнă, ытти чирсене йăлтах тĕрĕс пĕлнĕ.

— Мĕнле тĕрĕс мар диагноз? — ыйтнăччĕ Лев Петрович.

— Пĕр ухмах тимĕрçĕ лаша урине ашĕ çине çапса таканласан. Лаша урнă пулĕ, терĕм, мана пата та ямасть. Тапать, çыртатъ. Персе пăрăхмалла пулчĕ.

— Кайран епле пĕлтĕн?

— Пĕлтĕм. Чăн-чăн тухтăр вăл юмăçран та вăйлă.

Андрей Ермолаевичăн мухтавĕ — кĕнекесем. Вĕсем унăн тепĕр районти библиотекăран та нумай: тăвата пысăк шкаф, урайĕнчен маччана çити икĕ çӳлĕк. Кашни эрнерех вăл кĕнеке магазинне утать, почтăпа çырăнса илет. Кĕнекисем унăн тĕрлĕрен: Маркс, Энгельс, Ленин, Сталин сочиненийĕсем, тĕнчипех чапа тухнă писательсен кăларăмĕсем, ялхуçалăх

литератури. Кивӗ интеллигенцие вӑл ырлать, ҫамрӑккисемпе «ҫӑвӑр автан» тесе ятлаҫать. Имӗш вӗсем, виҫӗ пуслӑх пӗлеҫҫӗ те, ҫынсене пилӗк пуслӑх вӗрентме тӑрӑшаҫҫӗ.

Андрей Ермолаевич питех те ырӑ кӑмӑллӑ, палламан ҫын пырсан та апат лартмасӑр ямасть. Хӑйне кӑна шел, ватлӑха пӗччен ирттерет. Хавшарӗ ав, ытла та хавшарӗ, — ассӑн сывлать Лев Петрович. Каярахпа, мӗн хушӑра ҫывӑрса кайнине те сисмест.

**4**

Ирхине Тая ҫӑмарта ӑшалать, каллех сӑмавар лартать. Тул ҫутӑласси катара, анчах Лев Петрович мастерскойне ирех кайма хӑнӑхнӑ, паян ачисене те шкула хатӗрлесе ярас пулать, хӑйӗн те ӗҫе васкамалла.

Андрей Ермолаевичпа Лев Петрович иккӗшех ирхи апат ҫиеҫҫӗ. Ачасем вӑранман-ха.

— Левушка, шӑматкун ман пата пырӑр.

— Санӑн ҫуралнӑ кун ун чухне. Манман-ха эпир, пырӑпӑр.

— Сакӑрвун саккӑр тултаратӑп.

— Аптрамастӑн-ха халь. Шӑлусем те иккех ӳкнӗ.

— Пурӑнасчӗ, Левушка, вилес килмест. Пурнӑҫ ҫулран-ҫул юсанса пырать. Ҫынсем пурӑннине курас килет.

— Тая эрнекун пулӑшма пырать.

— Пытӑр ҫав. Ҫавна каласшӑн.

Андрей Ермолаевич апат ҫисе чей ӗҫнӗ хыҫҫӑн тав тӑвать, Тая аллине чуптӑвать, кӗсйинчен кӑларса уҫӑ тыттарать.

— Эп килте пулмасан, хӑвах уҫса кӗр. Виҫмине уяв пекки ман. Ыран каҫхине кӑштах апат-ҫимӗҫ хатӗрлеме пулӑш, Тая.

— Хӑв ӗҫместӗн. Камшӑн хатӗрлес?

— Хӑвӑр пыратӑр. Ветстанцинчен икӗ мӑшӑр, сирӗн директора чӗнес. Кам ыр сунать старике — пырӗҫ.

Вĕсем Лев Петровичпа урама тухаççĕ. Çаплипех шартлама сивĕ тăратъ. Тӳпе ярах уçăлса кайнă, таçти вĕçĕмсĕр уçлăхран килекен сивĕ те йăлтах çĕр çине аннăн туйăнать.

— Ан ман, Левушка. Кĕрсе тухкала, — алне парать Андрей Ермолаевич.

— Шăматкун, Андрей Ермолаевич.

**5**

Эрнекун каçхине Лев Петрович Шупашкартан кая юлса çитрĕ. Шофер ăна тӳрех килне леçсе хăварчĕ. Пӳрте вăл пысăках мар чăматан çĕклесе кĕчĕ. Вовка кăна-мĕн.

— Аннӳ ăçта? — ыйтре вăл унран.

Кĕнеке тытса ларнă ывăлĕ çĕкленчĕ, хăй пĕлекен хыпара пытармасăр пĕлтерчĕ.

— Андрей Ермолаевич вилнĕ. Анне унта.

Лев Петрович аллинчи чăматан çĕре татăлса анчĕ.

— Епле вилнĕ? — ыйтрĕ вăл тĕлĕнсе.

— Ватăлса вилнĕ, — тавăрчă ывăлĕ.

— Çуралнă кунĕ ун ыран. Парне илтĕм эп ун валли. Кролик тĕкĕнчен çыхнă свитер, сурăх тирĕнчен çĕленĕ ăшă пушмак.

— Анне çана çитсенех пыма хушрĕ.

Лев Петрович урайĕнчи чăматана çĕклерĕ, ăна лартса хăвармасăрах пӳртрен тухса ыткăнчĕ.

Çанталăк çемçелнĕ ĕнтĕ. Тӳпене кăвак пĕлĕтсем сырса илнĕ. Çил те тухнă. Вăл йывăç турачĕсем, пралуксем çинчи паса çĕре тăкать. Çул хытти те çемçелнĕ. Лев Петрович юпасем çинче çакнă лампочкăсем çутинче хăй килнĕ машинăн йĕрне курса кайрĕ.

Сакăр хваттерлĕ çурт патне çитсен кăна чупма чарăнчĕ, сывлăшне çавăрса ячĕ. Аялти хутри алăка питĕрмен, унтан сас-хура илтĕнет, анчах сăмахĕсене уйăрма çук. Сахал килнĕ-и кунта Лев Петрович? Кашни уявра

тенӗ пек пулнӑ. Тӑван та мар вӗсем, пӗр-пӗринпе паллашнӑ та уйрӑлман урӑх, тӑванран та ҫывӑх пулнӑ.

Вӑл алӑка тӗксе уҫрӗ. Тӑксӗм те пӗр кантӑксӑр пӳлӗмре лампочка саррӑн тӗлкӗшсе ҫунать. Ҫынсем зала пухӑннӑ. Лев Петрович малтанах Тайӑна асӑрхарӗ, унтан Андрей Ермолаевич кӳршине, трактор бригадин бригадирӗ пулнӑ Петр Григорьевича, унӑн арӑмне Анфиса Васильевнӑна курчӗ. Ҫӳллӗ те хытанка Анфиса Васильевна Лев Петрович кӗрсен сӑмахне тепӗр хут ҫирӗплетрӗ:

— Кӑнтӑрла кроликӗсене тухса апат панине хам куртӑм.

Лев Петрювич ҫапла ӑнланчӗ: Тая пырса кӗрсен пӳлӗмре никам та пулман иккен. Шала, Андрей Ермолаевич ҫывӑракан пӳлӗме, кӗме хӑйман вӑл. Люсьӑпа Петя амӑшӗ патне килсен аташкаласа шалти пӳлӗме кӗреҫҫӗ те каялла чупса тухаҫҫӗ.

— Анне, Андрей мучи те килтех, ҫывӑрать, — теҫҫӗ.

Тая чӗри тин сиссе илет. Кӗрет те: Андрей Ермолаевич хытнӑ та ӗнтӗ, пуҫелӗкӗ умӗнче кӑна пӗчӗк кӗленче выртать. Те эмел ӗҫсе вилнӗ, те чирлесе?

— Акӑ, — терӗ Тая, — сӗтел ҫинче сан валли ҫыру выртать. Конвертне ҫыпӑҫтарнӑ, уҫас темерӗмӗр.

Лев Петрович ҫырӑва уҫрӗ, Андрей Ермолаевич почеркне палларӗ.

«Левушка, тусӑм! Манӑн юлашки ыйтӑвӑм ҫапла: хӑв аҫуна пытарнӑ пек пытар мана. Эп сана хам ывӑлӑма юратнӑ пек юратрӑм, халь те юрататӑп. Анчах ҫӗр-анне — ӗмӗрех хыт кукар карчӑк — малтан вӑл пире пурне те ҫуратса пӑхса ӳстерет, кайран хӑй патне илет. Тупӑкне, Левушка, юманран тутар, часах ҫӗрсе кӑям мар, палӑкне эс хӑв аллупа ту (ку енӗпе эс ӑста, сахал мар ҫынсене ыр турӑн). Тупӑкӑма трактор ҫуни ҫине лартса илсе кайӑр. Халь тинех ӑнлантӑм: тӗнчере паян выльӑх мар, техника хуҫаланать. Пытарсан, виҫӗ хутчен пӑшалтан перӗр. Эпӗ — полковник, вунпӗр ҫул вӑрҫӑра ирттертӗм. Апла пулсан, эп — салтак, мана та салтак пек пытарӑр.

Карпэнт туа пома нэпотэс, тенĕ латынь, е вырăсла куçарсан: плоды твои внуки поделят, тени пулать. Эсĕ манăн ывăлăм, манăн пĕтĕм япала санăн. Хваттере, май пулсан, районти ветеринари музейĕ тăвăр. Кунта ялхуçалăх литературин библиотекине хăвар, унтах — районти ветеринари историйĕ. Ытти кĕнекисене хăв патна куçарса кай. Мана пытарнă чух укçана ан шелле, перекет кассинче çителĕклех. Юлашкипе ача сачĕ валли никĕс хывăр, туса пĕтермелĕх патшалăх укçа парĕ.

Больницăна касма илсе ан кайăр. Вĕсене хамах диагноз лартса паратăп: недостаточяая деятельность миокарда е тата пуç мимине юн кайма пултарать.

Халăхшăн пурăнтăм, Левушка, халăхпа пытарăр. Сисетĕп: аннемĕр-çĕр чĕнет мана. Ак менелнике ирттерĕпĕр, сана çак çыру ăçта выртнине ун чухне калăп. Эп вилсен уç эс ăна. Ан макăр. Малашне те хăвах пул: эс пуçаруллă, эс талантлă, сана калама çук телейлĕ пурнăç кĕтет. Аудентэс фортуна адьюват — хăюллине шăпа та пулăшать. Ĕçре эс яланах хăюллă, малашне те çавăн пек пул.

Усалпа ан асăн. Çуркунне вилтăпри çине чечексем акса хăвар, пĕр хурăн ларт. Ваттисем хурăн лартма хушман, анчах маншăн хурăн Тăван çĕршыв пек туйăнать. Телейлĕ эп. Ют çĕршывсенче те пултăм, ун чухне мана вилĕм тивмерĕ. Халь тăван çĕрте выртăп.

Пурте сыв пулăр.

Е. Е. Ермолаев».

— Мейĕр, вулăр, — терĕ вăл, юхса аннă куççуль тумламĕсене шăлса. — Эх, Ермолайч, Ермолайч... Эп сан валли парне илсе килтĕм. Ма пурнас мар сан хăвăн менелникуччен?!

— Темскерле эмел ăçсе вилмен-ши вăл? Кĕленчине тухтăрсене кăтартас, — терĕ Петр Григорьевич.

— Коньяк вăл, — тавăрчĕ Лев Петрович. — Манран та пытараттăн хăв чирне, анчах эп пĕлеттĕм.

— Епле коньяк? — чӑтаймасть кӳрши. — Вӑл пилӗк ҫул эрех сыпмасть.

Чӑтаймасть Лев Петрович калаймасӑр:

— Ӗмӗрне эмел ӗҫмен вӑл. Коньяка чӗрепе аптрасан сыпкӑмшар сыпнӑ. Ӑнлантӑн-и? Ку хутӗнче, ав, ӗлкереймен. Пурнатчӗ атту.

Андрей Ермолаевич Петр Григорьевича хисеплеменнине пӗлет вӑл. Вӗсене хыт кукар пулнӑшӑн, кашни пус укҫана перекетленӗшӗн кӑмӑлламастчӗ старик.

— Ҫавах тухтӑрсене кӑтартас.

— Кӑтартӑр ара, — тесе Лев Петрович тухса каять.

— Ӑҫта каян эс? — чарма хӑтланать Тая.

Инженер Вася бугров слесаре кайса чӗнчӗ, мастерсскойра вӗсем иккӗшӗ ҫур ҫӗр ҫитичченех ӗҫлерӗҫ: хулӑн тимӗр листисем касса хучӗҫ, ирхине ирех пырса палӑка электросваркӑпа ҫыпӑҫтарса тухрӗҫ, вӗҫлекине ҫӑлтӑр касса лартрӗҫ, сарларӗҫ.

Хӑй хушша хӑварнӑ пекех пытарчӗҫ Андрей Ермолаевича. Хӗрлӗ бархатпа витнӗ юман тупӑка трактор ҫунапа туртса пычӗ, салхуллӑ кӗвӗ калакан оркестр сасси мотор шавӗпе хутшӑнса керлерӗ. Тӑприне ярса пӗтерсен, сунарҫӑсем пӑшалтан виҫӗ хут печӗҫ. Чечек кӑшӑлӗсен шучӗ те ҫук: КПСС парти райкомӗнчен, райӗҫтӑвкомран, колхоз правленийӗсенчен, районти хаҫат портретпах некролог пичетлерӗ. Халӑх пасарти пекех кӗшӗлтетрӗ. Хуларан та, таврари ялсенчен те пухӑнчӗҫ. Пурӑннӑ чух, юлашки ҫулсенче ун патне никамах та ҫӳремерӗ. Халь, ак, вилсен кӑна халӑх епле ырӑ ҫынна ҫухатнине туйса илчӗ, хӑйне ҫак вилӗмшӗн парӑмри пек туйрӗ.

Ӗҫлекенсене хӑналама Тая Андрей Ермолаевич хваттернех илсе кайрӗ. Лев Петрович, вараракхпа пыратӑп тесе, хӑйӗн ӗҫ пӳлӗмне кӗчӗ. Ывӑнчӗ вӑл ҫак икӗ талӑкра. Тата мӗнпе татмалла-ха унӑн хӑй юлташӗ умӗнчи парӑма? Ҫук, кӗнекисене хӑй патне илсе кавӑл, ялхуҫалӑх техникин уйрӑмӗн библиотекине парать. Вулаччӑр механизаторсем, ырӑпа асӑнччӑр. Анчах латин чӗлхин кенекисене илет. Мӗнех, пушӑ вӑхӑтӗнче вӗренӗ. Ӑслӑ челхе

пулмалла. Андрей Ермолаевич халалласа хăварнă укçапа вăл ача яслин пӳлĕмĕсене гипсран эрешлет. Курччăр ачасем хитрелĕхе. Атту халь строительсем клуба та, витене те пĕрешкел тăваççĕ. Çара стенасем, сара мачча. Сада вăл Андрей Ермолаевич бюстне тутарса лартать. Тивĕçлĕ ăна старик.

— Эп вилсен ман тупăк хыççăн кам утĕ? — пырса кĕчĕ сасартăк Андрей Ермолаевич каланă сăмах Лев Петрович хăлхине.

— Утаканĕ нумай пулчĕ, — сасăпах хуравларĕ ăна инженер.

[1] Вĕреннисенчен хăв вĕрен, вĕренменнисене хăв вĕрент

[2] Ăсланса ватăлнă çын пуш параппана çапмасть (латинла)

*Емельянов, А. Менелник умĕн : [калав] // Емельянов, А. Чапшăн пурăнмастпăр / А. Емельянов. – Шупашкар, 1971. – С. 186-203.*